# **Ача**-пăча библийĕ
## Тăратаканĕ



# Çăтмах, Туррăн Чаплă Çурчĕ

Ҫыравҫи: **Edward Hughes**

**Иллюстрацилекенĕ**: Lazarus
**Alastair Paterson**

**Адаптацилекенĕ**: Sarah S.

Куҫаруҫ**и: www.christian-translation.com**

**Калăплакан компанийĕ**: Bible for Children
**www.M1914.org**

©**2021 Bible for Children, Inc.**
Лицензи: сутса яриччен сирĕн ҫак халапа копилесе
**илме** е пичетлеме ирĕк пур.

Иисус çĕр çинче пурăннă чухне хăйĕн вĕренекенĕсене Çăтмахра пирки каласа панă. Вăл ăна “Аттем Килĕ” тесе ят панă та унта уйрăмлатнă **пысăк та хитре çуртсем нумай** тенĕ. Çăтмах çĕр çинчи **кирек х**ăш çуртран **та** илемлĕрех.



**Иисус** çапла каланă: “Эпĕ сирĕн валли вырăн хатĕрлеме каятăп. Хатĕрлесен эпĕ каллех пырăп **та** сана хам пата йышăнăп.” Вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă хыççăн Иисус чăнах та Çăтмаха лекнĕ. Вĕренекенĕсем **ун çине пăхса тăнă** вăхăтрах **Иисуса тăман хупăрласа** илнĕ те вĕсен куçĕнчен **хупланă.**



Çавăнтанпа христиансем Иисус каялла таврăнма **тата вĕсене хăй** патне илесси пирки сăмах панине астăваççĕ. **Иисус** хăйне кĕтмен чухне **сасартă**к таврăнать тенĕ. **Анчах** та вăл **киличчен вилекен христиансемпе** мĕн **пулĕ-ха? Библире** вĕсем **тӳрех Иисус патне леке**ççĕ тенĕ. Ӳт-**п**ӳ çукки **Турăпа пĕрле пулнине пĕлтерет.**



**Уççăн калани, Библин юлашки кĕнеки, пире**
Çăтмах мĕн тери илемлĕ пулни çинчен калать.
**Чи тĕлĕнмелли –** Рай вăл - Туррăн пÿрчĕ. Турă
пур çĕрте те, анчах унăн
**престолĕ** - **Çăтмахра.**



**Ангелсемпе ҫӑтмахра ытти**
чунсем Турра пуҫҫапаҫҫӗ.
Ҫӑтмаха лекнӗ Туррӑн пур
ҫынни те ҫапла тӑвать.
Вӗсем **Турра мухтаса**
ятарлӑ юрӑсем юрлаҫҫӗ.



Акă вĕсем юрлакан пĕр юррăн хăш-пĕр сăмахĕсем:
ЭСĔ ТИВĔҪЛĔ, ЭСĔ ПИРЕ КАШНИ ЙĂХРАН,
КАШНИ ХАЛĂХРАН ХĂВĂН
**ЮНУПА** ҪĂЛСА ХĂВАРТĂН,
ТУРРĂМĂР **ВАЛЛИ ПАТШАСЕМПЕ СВЯЩЕННИКСЕМ** ТУРĂН.
**(Уççăн калани 5:9)**



**Библин чи юлашки страницисенче** Ҫăт**маха** “Ҫĕнĕ **Иерусалим**” тесе сăнланă.  Вăл питĕ пысăк**, тул** енчен ҫӳллĕ стенпа хупланнă.  Ăна **хрусталь пек т**ă**р**ă Яшм чултан тунă**.**  **Стена** никĕсне**, ытармалла мар чечексемпе витн**ĕ.  **Хулари** пур хапхана та пĕр **пыс**ă**к ахах п**ĕ**рчинчен** тунă!



Çав пысăк ахах хапха нихăçан та хупăнмасть. Айтăр кĕрерсе пăхса тухар ... Ай**-тур-тур**! **Шалтан** Çăтмах тата илемлĕрех. **Хулана** витĕр курăнакан таса ылтăнран тунă. **Урам**ĕсене те ылтăнран тунă.



Туррăн престолĕнчен илемлĕ те таса пурнăç юханшывĕ тухать. Юханшывăн икĕ енĕпе Эдем пахчинче пĕрремĕш хут ÿснĕ пурнăç йывăçĕ пур. **Ку** йывăç уйрăмах пысăк. Вăл вуникĕ тĕрлĕ çимĕç парать, кашни уйăхра тĕрли. **Пурн**ăç йывăçĕн ç**ул**çисем халăха сыватаççĕ.



Çă**тмахра** çутă **пулт**ăр тесе хĕвел е уйăх кирлĕ **мар.** **Тур**ă мухтавĕ ăна тĕлĕнмелле çутăпа **тултарать.** **Унта** нихçан та каç пулмасть.



Тӳпери чёрчунсем те урăх.  Вĕсем **пурте алла** вĕреннĕскерсем те туслă.  Кашкăрсемпе **путексем** пĕрле курăк çисе пурăнаççĕ.  Хăватлă арăслансем те вăкăр пек улăм çиеççĕ.  Турă çапла калать: “Вĕсем манăн сăваплă тăвăм çинче сиен тумĕç, ăна аркатмĕç.”



Йĕри-тавра пăхсан эпир Çă**тмахра хăш-пĕр** япаласем çуккине сă**натпăр.** Нимĕнле **ылхан** сăмахсем те илтĕнмеççĕ.

**Никам** та кĕрешмест, **эгоистла** хăтланмасть. Алăк çинче çăра çук**,** мĕншĕн **тесен** Çăтмахра вăрăсем те çук**.** Суеçĕсем**,** çын вĕлерекенсем**,** тухатмăшсем **е ытти усал** çынсем **те** çук**.** Тӳпере нимĕнле çылăх та çук**.**



Туррăн Çăтмахра урăх куççуль çук. Хăш-пĕр чухне Турă халăхĕ çак пурнăçри пысăк хуйхă-суйха тӳссе макăрать. Тӳпере Турă пурин куççульне те шăлса типĕтĕ.



Çăтмахра вилĕм те çук. Турă халăхĕ ĕмĕр-ĕмĕрех унпа пĕрле пулĕ. Урăх хуйхă та, куççуль те, ыратни те пулмĕ. **Ни чир**-чĕр, ни уйрăлу, ни пытару. Пĕлĕтре пурте турăпа **ялан** телейлĕ.



Çăтмах Иисус Христоса хăйсене Çăлаканĕ вырăнне хурса ĕненекен, ăна хăйсен Патши вырăнне хурса пăхăнакан арçын ачасемпе хĕр **ачасем (аслисем те) валли.** Çă**тмахра Путек** Пурнăçĕн Кĕнеки пур. Ăна çынсен ячĕсемпе **тултарн**ă. Унта камăн ятне çырнине пĕлетĕр**-и эсир? Иисуса** шаннă çынсен ячĕсене пурне **те.** Сирĕн ятăр унта**-и?**



**Библири** Çăтмахра пурăнма чĕнсе калани вăл - тĕлĕнмелле йыхрав. “Сывлăш **та,** çураçнă хĕр те: ‘**Пыр!**’ **тетч**ĕ**р**, ă**на илтекен те: ‘Пыр!’ – тет**ĕ**р – Пырас теекен пыт**ă**р. Илес текен** çав чĕрĕ шыва **ахалех** илтĕр”.



Çăтмах, Туррăн Чаплă Çурчĕ

Турă Сăмахĕнчи, Библири, **халап**

**ра вырнаçнă**

**Иоанн 14; 2 Коринф 5**
**(Коринфсем патне янă иккĕмĕш**
**çырăвăн пиллĕкмĕш пайĕ;**
**Уççăн калани 4, 21, 22**

“Сирĕн Сăмахăрсен алăкĕ çутă парать.”
**Псалом 119:130**

Běçě

Библири çак истори пире хамăр тĕлĕнмелле Турă çинчен каласа парать, вăл пире пултарнă тата эсир ăна пĕлччĕр тет.

Эпир япăх ĕççем тунине турă пĕлет. Çылăхшăн **наказани**-вилĕм, Анчах Турă сире питĕ хытă юратать, çавăнпа Вăл Хăйĕн Пĕртен-пĕр Ывăлне Иисуса Хĕрес çинче вилме тата сирĕн çылăхăрсемшĕн наказани пама янă. **Унтан** Иисус пурнăç патне таврăннă та киле, Пĕлĕте, кайнă! **Эсир** Иисуса ĕненетĕр пулсан тата çылăхăрсене каçарма ыйтатăр пулсан, вăл çавна тăвĕ! Вăл килĕ те халĕ сирĕнте пурăнĕ, вара эсир унпа ĕмĕр-ĕмĕр пурăнатăр.

Эсир ку чăнлăх пулнине ĕненетĕр пулсан, çакна турра калăр: Хаклă Иисус, эпĕ эсĕ Турă пулнине ĕненетĕп, çылăхăмсемшĕн вилме этем пулса тăтăм, халĕ Вара эсĕ каллех чĕрĕ. Тархасшăн, ман пурнăçа кĕр те ман çылăхсене каçар: эпĕ халех çĕнĕ пурнăçпа пурăнма, пĕррехинче санпа яланлăхах пурăнма пултарăп. **Мана** сана пăхăнса тăма, саншăн ачу **пек** пурăнма пулăш. **Аминь.**

Библие вулăр та Турăпа кашни кун калаçăр! **Иоанн 3:16**